ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

Тантăш

6+

38 (4504) №, 2016, сентябрь (авăн), 29
1931 çулхи январĕн (кăрлачăн) 12-мĕшĕнче тухма тытăннă

Хакĕ ирĕклĕ
Индексĕ: 54802

ХАСТАР

Шкул ятне çӳлте тытаканскер

Çиччĕмĕш класри Катя Андреева çитĕнĕвĕсем пирки тус-юлташĕ хăпартланса каласа парать.

– Лайăх вĕренисĕр пуçне вăл хастар спортсменка та. Çăмăл атлетикăра ăна çитекен çук. Хытă чупать, тĕрлĕ ăмăртура çĕнтерет. Шкул ятне çӳлте тытать, – тет чи çывăх юлташĕ Клава Егорова.

Хĕрача ашшĕне хывнă. Юратнă çынни, Николай Иванович Андреев, шкулта тренерта ĕçлет.

– Çитĕнӳсенче аттен тӳпи питĕ пысăк, вăл маншăн тăрăшать. Анчахрах унăн портфолионе тытса пăхрăм. Спортри çитĕнĕвĕсемшĕн илнĕ грамотăпа дипломсен шучĕ çук. Кубок та чылай унăн. Икĕ аппа та, пичче те спортпа туслă. Ял хуçалăх академийĕнче вĕренекен Алена аппа сăрт-ту çинче чупас енĕпе Раççей чемпионĕ. Ун пек хастар пулас тесен манăн тата нумай тăрăшмалла-ха. Шкултан вĕренсе тухсан медицина енĕпе каяс ĕмĕт пур. Паянхи саманара çынсем час-час чирлени чăнласах шухăша ярать. Вĕсене питĕ пулăшас килет. Хальлĕхе вара эпĕ аппан ачипе, виççĕри Никăпа, тухтăрла выляма кăмăллатăп. Пĕлетĕр-и, пĕчĕкскере питĕ-питĕ юрататăп. Вăл маншăн хĕвелтен те çутăрах, ылтăнран та хаклăрах. Эпĕ шкултан таврăнасса чăтăмсăррăн кĕтет. Ăна валли лавккаран яланах мĕнле те пулин кучченеç илсе килетĕп. Пылак çимĕç е ручка-кăранташ, альбом е тетрадь – пурне те хапăлласа йышăнать. Кашни парнешĕн хĕпĕртет, алă çупса ташлать. Хĕвел пек йăл кулать. Мускавра пурăнакан Сергей пиччен ачишĕн те тунсăхлатăп. Вĕсем аякра пулнăран час-час кураймастăп Машăна. Халĕ утма-чупма тытăнчĕ те пушшех йăрăланчĕ ахăртнех. Декабрь уйăхĕнче иккĕ тултарать, ăна валли парне те хатĕрлĕп-ха, – хăпартланса та мăнаçланса каласа парать Катя.

Кайăк-кĕшĕке, выльăх-чĕрлĕхе те юратать вăл. Хăйсем тăватă качака усраççĕ.

– Качакасене усал тесе каланине пĕрре мар илтнĕ-ха, анчах пирĕн унашкаллисем мар. Ачашскерсем. Путеккисем хамăр çума куршанак пек çыпçăнаççĕ. Çулла вĕсемпе улăхра çӳреме кăмăллатăп. Эпир çеç мар, выльăх тавраш та ăшă куна юратать, – тет Катя. – Çавăн чухне кĕнеке вулани те маншăн ăнăçлă пек туйăнать.

Элиза ВАЛАНС.

Йĕпреç районĕ,
Кĕлĕмкасси.

Çырăнтару – 2017

«ХЫПАРА» – КАШНИ ÇЕМЬЕНЕ

2017 çулăн I çурринче илсе тăмашкăн
декабрь уйăхĕн 26-мĕшĕччен 30% йӳнĕрех –
«ХЫПАРА» – 572,88 тенкĕпе, **«ХЫПАР-эрнекуна»** – 279,36 тенкĕпе,
«ТАНТĂША» – 226,08 тенкĕпе, **«САМАНТА»** – 171,84 тенкĕпе,
«ТЕТТЕНЕ» 135,42 тенкĕпе
кашни çыхăну уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ

ЧР ПУҪЛĂХĔН СТИПЕНДИАЧĔ

Кашни медальте – савăнăҫ

Василий Ялуков пĕрремĕш класра ишме вĕреннĕ. «Паттăр» физкультурăпа спорт комплексĕ уҫăлсан вăл унта ишев секцине ҫӳреме тытăннă. Владимир Арсентьевич Карягин тренер патĕнче ăсталăхне туптаканскер часах спортăн ҫак тĕсĕ хăйне валлиех пулнине ăнланса илнĕ. Вăл тӳрех спортăн икĕ тĕсĕпе ăмăртусене хутшăнма тытăннă. Анчах акватлона ытларах килĕштерет, мĕншĕн тесен унта чупасси те, ишесси те пур.

Ҫĕнтерӳ кахалланса лараканпатне килмест, унпатне хăвăн ҫул уҫмалла. Вася, сăмахран, кашни ирех шкула кайиччен бассейна ҫитме вăхăт тупать.

– 500 метра яхăн пĕр чарăнмасăр ишме хăнăхсан чăтăмлăх ӳссех пырать, ҫапла вăйлăрах ишме тытăнатăн, – сĕнет вăл спортăн ҫак тĕсне тин кăна пуҫăнакансене.

Ăмăртусенче тивĕҫнĕ кашни медале савăнăҫпа аса илет Вася. Акватлон енĕпе вăл республика тата Раҫҫей шайĕнчи ăмăртусене те хутшăннă. Паллах, ҫакă хăвна ыттисемпе танлаштарма, ҫитменлĕхӳсене асăрхаса тата лайăхрах хатĕрленме хистет.

Хастарскер районти «Паттăр» физкультурăпа спорт комплексĕнчи ҫарпа патриот клубне те ҫӳрет. Унта автомат салатма тата пуҫтарма, винтовкăран пеме, тĕрлĕ чăрмав витĕр тухма тата ытти хăнăхăва вĕреннĕ. Вася ҫар ҫынни пулма ĕмĕтленет, ҫавăнпа тĕллевне пурнăҫа кĕртме ҫине тăрсах тăрăшать.

Пушă вăхăтра вун виҫĕ ҫулти шăллĕпе Савелипе выляма, пĕрле аниме пăхма мĕн тери интереслĕ-ҫке. Асли кĕҫĕннине спортпа туслаштарма тăрăшать, тĕрлĕрен хăнăхтару пурнăҫлаттарать. Шăллĕ те питĕ маттур, пиччĕшĕнчен юласшăн мар.

Васьăн чун киленĕҫĕ нумай. Юрлама тата ташлама юратать вăл. Ахальтен мар музыка шкулĕнче пĕлӳ илнĕ, сцена ҫинче хăйне тытма вĕреннĕ. Унсăр пуҫне кĕнеке вулама та кăмăллать, фантастика жанрĕ уйрăмах килĕшет ăна. Чи юратни – Н.Перутовăн «Алмазран тата йывăҫран тунă хĕҫ» кĕнеки, икĕ пайĕ те чунне тыткăнланă иккен.

– Ҫак кĕнекене вуласа тухнă хыҫҫăн хамăн та ҫавăн пекрех хайлав ҫырас килчĕ. Анчах темĕнле тăрăшсан та усси ҫук. Ҫырасси пурин те пулмасть иккен, – тет маттур каччă.

Вася – ЧР Пуҫлăхĕн стипендиачĕ. Тăрăшулăхне, хастарлăхне, пултарулăхне кура илнĕ вăл ҫак сумлă хавхаланăва.

– Стипендие тивĕҫес тесен, манăн шухăшпа, ҫыннăн нумай паха ен пулмалла: лайăх вĕренмелле, спорт ăмăртăвĕсене хутшăнмалла, конкурссенче ҫĕнтермелле, пур ҫĕрте те хастар пулмалла, аслисене пулăшмалла… Эпĕ волонтер пулнă май ветерансем патне тăтăшах ҫӳретĕп, вĕсене ҫăмăллăх кӳрес тетĕп. Паллах, ҫакă та ҫитĕнӳ тума хавхалантарать, – терĕ Вася «Тантăш» вулаканĕсене ăнăҫу суннă май.

Лариса ПЕТРОВА.
Патăрьел районĕ,
Патăрьел, 2-мĕш шкул.

ҪĔНĔ КĔНЕКЕ

Фотохудожник тĕнчене еплерех курать-ши?

«Сăнӳкерчĕк хальхи вăхăта ҫеҫ сăнлать. Эсир ăна ӳкерсе илсенех вăл иртнин пĕр пайĕ пулса юлать», – тенĕ Америкăн паллă сăнӳкерӳҫи Беренис Эббот. Унăн сăмахĕсем чăнлăхпа пĕр килнине сăнӳкерчĕксене пăхса киленнĕ чухне уйрăмах тарăннăн туйса илетĕн. Пурнăҫри пĕлтерĕшлĕ самантсене, илеме, хăйевĕрлĕхе анлăн кăтартать ҫак искусство.

Алăра – «Тĕнче – фотохудожник куҫĕпе» ҫĕнĕ кĕнеке. Унăн авторĕ Чăваш Енĕн паллă фотохудожникĕ, ЧР культура тава тивĕҫлĕ ĕҫченĕ Илья Степанович Клочков. Хăй ĕмĕрĕнче миҫе пин сăнӳкерчĕк туманши вăл? Ăҫта кăна пичетленмен-ши вĕсем? Тĕрлĕ хаҫат-журналта, ҫав шутра «Тантăшра» та час-часах кун ҫути кураҫҫĕ фотоăстан ĕҫĕсем.

Тин ҫеҫ пичетленсе тухнă кăларăма Илья Степанович 75 ҫул тултарнине тата «Халăх шкулĕ» педагогика журналĕ тухма тытăннăранпа 90 ҫул ҫитнине халлланă. Унти фотоиллюстрацисенче республикăри мероприятисене, вăтам тата аслă шкулсемпе професси училищисен ĕҫĕ-хĕлне анлăн ҫутатнă. Ҫавăн пекех сăнӳкерӳҫĕпе, унăн ăсталăхĕпе ҫыхăннă паллă ҫынсен аса илĕвĕсене те кĕртнĕ.

– Пурнăҫăн пысăк пайне эпĕ ачасемпе ĕҫлесе ирттертĕм. Шупашкарти Пионерсен ҫуртĕнче, тĕп хуламăрти Ленин районĕнчи Ҫамрăк техниксен станцийĕнче фотокружок ертӳҫинче тăрăшрăм. Вĕренекенсен тата вĕрентĕвĕн ĕҫĕ-хĕлĕпе ҫыхăннă «Халăх шкулĕ» журналта та ĕҫлерĕм.

Тăрăшни сая кайман – ҫакă савăнтарать. Эпĕ тахҫан ертсе пынă ачасем паянхи кун сумлă ĕҫре вăй хураҫҫĕ. Тĕслĕхрен, Шупашкарти 10-мĕш шкултан вĕренсе тухнă Александр Хван Мускавра – кинорежиссерта, Эдуард Михайлов фотожурналистра ĕҫлеҫҫĕ.

Пытармасăрах калатăп: хамăн пĕлĕве пĕтĕмпех ҫитĕнекен ăрăва паратăп эпĕ. Унсăрăн пурнăҫа курмастăп, – ҫырать Илья Степанович.

Методика пособийĕсен, статьясен, фото тата видеооператор программисен учебникĕсен авторĕ тин ҫеҫ кун ҫути курнă черетлĕ кăларăмне чылай сăнӳкерчĕкпе пуянлатнă. Ытларах унта ачасем, ҫамрăксем, паллă ҫынсем… Кĕнекере сăн ӳкерме вĕренекенсене сĕнӳсем пани тата мĕнле паха! Пейзаж, портрет, натюрморт, сюжетлă ӳкерчĕксем еплерех тумаллине ансат чĕлхепе, пурне те ăнланмалла ҫырнă унта.

«Тĕнче – фотохудожник куҫĕпе» кĕнеке фотоăсталăхпа хальтерех ҫеҫ кăсăкланма пуҫланисемшĕн те, ку енĕпе тахҫанах ĕҫлекенсемшĕн те усăллă пулĕ.

Нина ЦАРЫГИНА.

Тантăш
чăваш ачисен хаҫачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство ҫурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАҪАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (ҫур ҫула) – Чăваш Республикинче

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство ҫурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 64-24-01

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
М.М.АРЛАНОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, ҫырусемпе
тата юнкорсемпе ĕҫлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 28-83-70
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВҪИ
Л.ПЕТРОВА

● КАЛĂПЛАВҪĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

● ТИРАЖ
1178 экз.

● ЗАКАЗ № 3459
Пичете авăн уйăхĕн
28-мĕшĕнче алă пуснă.

4 627126 799906

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

Вĕрентекен кунне паян 120 çĕршывра анлăн паллă тăваççĕ. Саспаллипе паллаштарма, хушма-кăларма, хутлама-пайлама тата ытти нумай ĕçе хăнăхтаракан чи çывăх сыннăмăрсем професси уявĕнче кăна мар, кулленех ырă сăмаха çеç тивĕç. Вĕсене çывхаракан уяв ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр, ырлăх-сывлăх, телей, ĕçре çитĕнӳ сунатпăр. Эсир хăвăр тăрăшса çитĕнтернĕ чечексенчен хатĕрленĕ çыхă, ăсталанă пĕр-пĕр пĕчĕк çеç парне, открытка парсан аслă тусăрсем тем пекех савăннă пулĕччĕç. Хăйтытăмлăх кунĕ йĕркелесен вĕсем пушшех те хĕпĕртĕç, хăйсен вĕренекенĕсем епле çитĕнсе пынине туйса-курса савăнĕç. Ачасем хатĕрленĕ пĕчĕк çеç сценка та, уяв концерчĕ те учительсемшĕн нимĕнрен те хаклă парне вырăнĕнчех пулĕç. Апла пулсан, тусăмăрсем, савăнтарар хамăрăн вĕрентекенсене. Уяв ячĕпе сире пурне те!

Учителĕн ĕçĕ пит йывăр:
Атте те, анне те пулан.
Анне тĕк – выртса эс ан çывăр,
Атте тĕк – ларса эс ан кан.
Валентин УРТАШ.

Елчĕк шкулĕ

Чуна çывăх Елчĕк шкулĕ,
Шав васкатăп ир-ирех.
Пур ача та ăслă пулĕ –
Тăрăшса вĕрентнипех.

Ачисем кунта маттур-çке:
Вĕренме, ĕçре, спортра.
Пур çĕре те ĕлкĕреççĕ,
Тăрăшулăхĕ – чунра.

Шкулĕ хăтлă та илемлĕ,
Кашни ир пире кĕтет.
Вĕренсе пулар пĕлӳллĕ –
Ыр малашлăхĕ чĕнет.

Алевтина НИКОЛАЕВА,
вĕрентекен.

Куславкка районĕ,
Елчĕк шкулĕ.

21-мĕш ĕмĕр вĕрентекенĕ

Кĕрхи кунсем çитсен эпир чун-чĕрепе шкула туртăнатпăр. Пĕрремĕш шăнкăрав янăранă чухне те, Вĕрентекен кунĕнче те хамăра ăс паракансем çине уйрăмах тимлĕ пăхатпăр. Çак кунсенче пирĕнпе пĕрле вĕсем те хумханаççĕ, хăйсен умне çĕнĕ тĕллевсем лартаççĕ. Юратнă вĕрентекенĕмĕрсен пĕтĕм шухăш-ĕмĕчĕ – пире тарăн пĕлӳ парса пурнăç çулĕ çине кăларасси. Эпĕ вĕрентекенсен кăмăлне лайăх пĕлетĕп, мĕншĕн тесен манăн анне те – çак професси çынни.

Аннеçĕме Ирина Минахметовна Соколова тесе чĕнеççĕ. Вăл хĕвеллĕ Узбекистанри Гулистан хулинче çуралса ӳснĕ. Ачалăхпа яшлăх çулĕсенчех ăна пĕр ĕмĕт çунатлантарнă – учитель пулаcси. Вăтам шкултан вĕренсе тухсан анне Гулистан хулинчи университета вĕренме кĕнĕ, çут çанталăка питĕ юратнăран биологи учителĕ специальнăçа суйласа илнĕ. Тĕрлĕрен чечек, пахчаçимĕç, йывăç-тĕм ӳстерессин вăрттăнлăхне те алла илме май пур. Университетран вĕренсе тухсан, çĕршывра арпашуллă пурнăç пуçланнипе, анне кукамайăн тăван ялне ĕçлеме куçнă. 1994 çулта Юмашри вăтам шкулта биологи предметне вĕрентме тытăннă. Çамрăк, пултаруллă, хастар учителе часах асăрханă кунта. Шкул коллективĕ ăна хаваспа йышăннă. Паян кунченех анне çак шкулта ачасене пĕлӳпе воспитани парас ĕçре тăрăшса ĕçлет. Пĕр-пĕр ăсталăхпа палăрнă çын çинчен калаçнă чухне: «Турă пани пур çак этемĕн», – теççĕ. Ирина Минахметовна çинчен те çакна каласа хăварас килет: Турă ăна, чăнах та, чăн-чăн вĕрентекен пулмах пӳрнĕ пулĕ.

Шкулта ĕçленĕ вăхăтра Ирина Минахметовна миçе ачана ăс-тăн паман-ши, пурнăçра тĕрĕс çул суйласа илме камакама пулăшман-ши? Унăн ăсталăхне, тăрăшулăхне кура тата вун-вун хĕр-упраç вĕрентекен профессине суйласа илнĕçке.

Ирина Минахметовна ачасене тĕрлĕ предметпа пĕлӳ панă. Пушкăртстан культурипе историне вĕрентнĕ. Хĕрачасене ал ĕçĕ тума та, апат-çимĕç пĕçерме те хăнăхтарнă. Кирек хăш предмета вĕрентсен те яланах çитĕнӳсем пулнă. Вăл вĕрентнĕ ачасем республика шайĕнчи олимпиадăсене хутшăнса малти вырăнсене пĕрре кăна мар çĕнсе илнĕ. Рина Латыповăпа Илюза Фахртдинова – Пушкăртстан историйĕпе иртекен олимпиадăсен çĕнтерӳçисем. Уроксенче тунă япаласем паянхи кун та ĕç кабинетне илем кӳрсе лараççĕ. Эпĕ тĕлĕнетĕп: çак япаласене ăсталама ăçтан тавçăрулăх çитернĕ-ши? Ун чухне хальхи пек компьютер та, Интернет та пулман-çке. Чăннипе чунне парса ĕçлекен çын кăна çакна ăсталама пултарнă.

Анне шкул заведующийĕнче нумай çул ĕçлерĕ. Мĕн чухлĕ чечек, пахчаçимĕç туса илмен-ши! Кунĕпе шкул садĕнче ачасемпе ĕçлет, киле таврăнсан вара пахчара тăрмашать. Вăл вăхăтра эпир – аппа, эпĕ тата шăллăм – пулăшма пултарайман, пĕчĕк пулнă. Атте уйăхĕ-уйăхĕпе Çĕпĕрте ĕçленĕ. Нихăçан та вăл ӳпкелешнине илтмен. Биологи учителĕ пулнипе ку ĕçе те хăйĕн тивĕçĕ тесе йышăннă.

Виççĕмĕш çул манăн анне шкул директорĕ пулса тăрăшать. Çак йывăр ĕçе те вăл тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пырать. Тăван шкулшăн пĕтĕм чун-чĕрипе хыпса çунать.

Ман шутпа, 21-мĕш ĕмĕрти вĕрентекенсем çакăн пек пулма тивĕçлĕ те. Хăйсен ĕçне парăнса, тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пынипе çĕршыва юрăхлă çамрăксене ӳстереççĕ. Çĕр çинче мĕн ырри пур – йăлтах вĕрентекенрен тухать: пурне те асăрхать, йăнăш тусан – тĕрĕс çул çине тăратать, ăнланмасан – айăплама та пултарать, анчах ытларах чухне – каçарать. Çапла туса вăл ача чунĕнчи ырă туйăмсене вăратать, ыррипе усаллине уйăрса илме вĕрентет.

Анита СОКОЛОВА,
9-мĕш класс.

Пушкăртстан,
Чекмагуш районĕ,
Юмаш шкулĕ.

Ăшă саламсем

СМС саламсене пĕлтермелли номер:
89051975911

Етĕрне районĕнчи Чирĕккасси ялĕнче пурăнакан маттур тăванăм, Мускаври автоçул институчĕн Шупашкарти филиалĕнче 3-мĕш курсра вĕренекен **Сергей Павлович ШУМИЛОВ** 20 çул тултарать. Ăна хурçă пек çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, чăн-чăн юрату, кашни утăмрах ăнăçу сунатпăр.

Пур тăвансен ячĕпе кукашшĕн йăмăкĕ Нина МИХАЙЛОВА.

Элĕк районĕ,
Мăн Карачура.

✧ ✧ ✧

Элĕк районĕнчи Мăн Карачура ялĕнче пурăнакан, 30 çул ытларах фермăра ветеринар пулса ĕçлекен, мăшăрĕпе икĕ хĕр çуратса ӳстернĕ **Фаина Владимировна РЕДЬКОВА** 50 çул тултарать. Ăна чĕререн çирĕп сывлăх, çемьере килĕшӳпе татулăх, ĕçре пысăк çитĕнӳсем, ăнăçупа ăнтăлу сунатпăр.

Ял халăхĕ, тăванĕсем.

Элĕк районĕ,
Мăн Карачура.

✧ ✧ ✧

Элĕк районĕнчи Йăлкăш ялĕнче пурăнакан, ĕмĕрех йывăççем лартса тавралăха илемлетнĕ акăлчан чĕлхине вĕрентнĕ, мăшăрĕпе пилĕк ача çуратса ӳстернĕ **Владимир Петрович КОНСТАНТИНОВА** 70 çулхи сумлă юбилейĕпе чĕререн саламлатпăр. Иксĕлми телей, юман пек çирĕп сывлăх, куллен вăй-хăват, ăнăçу, вăрăм кун-çул сунатпăр.

Юбилей ячĕпе саламлатпăр,
Таврана илем кӳнĕ ыр çын!
Чĕререн çирĕп сывлăх сунатпăр,
Ăнăçу та телей кашни кун!

Салампа мăшăрĕ, хĕрĕ, кĕрӳшĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем тата пур тăванĕ, пĕлĕшĕсем.

✧ ✧ ✧

Элĕк районĕнчи Мăн Карачура ялĕнче пурăнакан, юрлама юратакан, халĕ те сценăпа туслă **Александра Васильевна ПЕТРОВА** çак кунсенче 80 çул тултарчĕ. Сумлă юбилей ячĕпе кăмăлтан саламлатпăр. Хурçă пек çирĕп сывлăх, вăрăм кунçул, кулленех ăнăçу, тулли телей сунатпăр.

Хĕрĕ, мăнукĕ, кĕçĕн мăнукĕсем, сцена ăстисем, ял-йыш.

Элĕк районĕ,
Мăн Карачура ялĕ.

✧ ✧ ✧

Шупашкарта пурăнакан, ача пахчине çӳрекен **Максим Александрович КАЛЕНОВА** 5 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, телейлĕ ачалăх, кулленех ӳсĕмсем, аталану сунатпăр.

Салампа ватă кукамăшĕпе кукашшĕ, асламăшĕпе аслашшĕ, ашшĕпе амăшĕ, йăмăкĕ тата мĕнпур тăванĕ.

Ачан кун йĕркки мĕнле пулмалла?

Пĕрремĕш класра вĕренекен пурнăçĕшĕн кун йĕркки уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пĕчĕкскерĕн тин çеç хутшăннă çĕнĕ тĕп тивĕçне – вĕренмеллине – шута илнисĕр пуçне унăн тата тимлĕ, йĕркеллĕ пулмалла. Кун йĕркки вара ĕçпе канăва тĕрĕс йĕркелеме, çĕнĕ пурнăç условийĕсене хăнăхма пулăшать.

Ĕçлес пултарулăх яра кунах пĕр пек пулмасть. Ашшĕ-амăшĕн çакна шута илмеллех. Килти ĕçсене каçа юлса тутарнин усси сахалрах.

Шкула кайма килтен васкамасăр пуçтарăнса тухмалла. Ачан вара шкула çӳремелли çулне лайăх пĕлсе тăмалла. Ашшĕ-амăшĕн хăйсен пепкин хăш çулпа каймаллине, çул урлă каçнă чухне асăрхануллă пулмаллине ăнлантарсах тăмалла.

Хăш-пĕр ача уроксем хыççăн киле кайнă чухне çул çинче нумай вăхăт ирттерет. Çавăнпа та шкултан тухсанах тӳрех таврăнмаллине, апатланнă хыççăн уçăлса çӳремеллине ăнлантармалла, çаксене пурнăçлама хăнăхтармалла.

Вĕренӳ программи çăмăл мар, çавна пулах ача шкулта самай ывăнать. Çакна аслисен асра тытмалла. Ачана киле çитсен выртса канма, çывăрма та ирĕк памалла.

Пĕтĕм ĕçе вĕçлесен çемье пĕрле пуçтарăнать. Кун пек чухне кашни тĕрлĕ ĕçре хăйĕн киленĕçне тупать. Ачана та хăвăрпа пĕрле çав ĕçсене явăçтарăр, унпа пĕрле пулма тăрăшăр. Унăн та, сире кунĕпех курманскерĕн, ашшĕ-амăшĕпе пĕрле пулас, хутшăнас килет.

Пĕрле тĕрлĕ передача пăхма, кĕнекери пĕр-пĕр калава сӳтсе явма та вăхăт тупма майсем шырамалла.

Вăхăтра çывăрма вырттарăр. Лайăх канса çитнĕ ача тулли те хаваслă кăмăлпа тепĕр кун каллех шкул сукмакне такăрлатĕ.

Наталия ШАМБУЛИНА,
вĕрентекен.

Комсомольски районĕ,
Хырай Ĕнел шкулĕ.

КРОСС

«Çĕнтерсен – савăнатпăр!»

Иртнĕ канмалли кун Чăваш Енри 60 пине яхăн хастар Пĕтĕм Раççейри Наци чупăвне кăмăлтан хутшăнчĕ. Уява пухăннисене Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Шелтуков, Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков, РФ спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ, Олимп вăййисен кĕмĕл призерĕ Олимпиада Иванова ăшшăн саламларĕç. Чупăва хутшăнакансене ĕçре, вĕренӳре, кулленхи пурнăçра пысăк çитĕнӳсем сунчĕç.

Атлетсем тĕрлĕ дистанцие парăнтарчĕç. Çамрăксем 4000, аслисемпе пĕчĕккисем 1000 метра чупрĕç.

Шкул ачисен хушшинче Çĕнĕ Лапсарти Дарья Васильева чемпион пулчĕ. Шупашкарти 48-мĕш тата 33-мĕш шкулсенчи Анна Шмагинăпа Екатерина Скугарова иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене пайларĕç. Арçын ачасенчен Михаил Ефимова, Вадим Михайлова, Кирилл Скрябина çитекен пулаймарĕ.

– Эпир мĕн пĕчĕкрен спортпа туслă, кашни ăмăртăва хутшăнма тăрăшатпăр. Çĕнтерсен, паллах, савăнатпăр! Çакă пире вĕренӳре те пулăшса, хавхалантарса пырать, – терĕç хастарсем.

«Чи çамрăк спортсмен» ята çулталăк та вунă уйăхри Виктория Михайловăпа икĕ çул та виçĕ уйăхри Егор Еремеев тивĕçрĕç.

АЙ-АЙ-АЙ, КУ-КУ!

Альбина ИСЕМПИ

Пĕчĕк чухне больницăра выртнине Наçтук манмасть. Кашни кун укол тăваççĕ унта. Ыратнине тӳсмелле. Эмел ĕçмелле. Шалт йăлăхтарать.

Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ пулин те тухтăр патне каймаллине пĕлсенех чĕри хăвăрттăн тапма пуçлать хĕр пĕрчин. Таçта тарса пытанĕччĕ больницăран хăталас тĕллевлĕскер. Чееленсе тĕрлĕ сăлтав тупма тăрăшать тата. Амăшĕ ăна юн пама каймалли пирки аса илтернĕччĕ. Унта чун туртманран Наçтук час-часах юлташĕ патĕнче тытăнса тăчĕ, унпа вăрахчен вылярĕ.

Пĕр кунхине урамра мăнукĕ асламăшне аякранах асăрхарĕ. Наçтуксенчен инçе мар пурăнать вăл, час-часах çитет вĕсене курма.

– Асанне, тапăчки туянтăн-и? Пĕлĕт пекех кăн-кăвак, таçтанах курăнать, – ăна хирĕç чупрĕ хĕр пĕрчи. – Эх! Пахилкке-çке! Пăх-ха уру çине, асанне...

– Ай-уй, хăямат, – аллине шарт! çапрĕ ватă, – больницăран таврăнатăп вĕт, мăнукăм. Хывма маннă та çаплипех чаштăртаттарса çитнĕ. Никам та асăрхаттармарĕ-çке ун пирки. «Пахилкепех танкăлтатать ку карчамас», – терĕç пулĕ çав. Урăх манас марччĕ-ха. Кусене, усă курнисене, хăшĕ-пĕри пек кĕсьене чикес мар-ха, чир-чĕр çакланса ан пытăрах, çӳп-çап савăтне пăрахас. Наçтук, эсĕ те яланах çапла ту. Ыран сиплев çуртне пыратăн-и манпа? Атту киле каллех пахилккепе таплаттарса çитĕп те... – чееленчĕ ватă.

– Юрĕ, асанне, пыратăп.

Тепĕр кун вĕсем çитнĕ çĕре черет темĕн тăршшехчĕ. Кам хыççăн тăмаллине пĕлсен асламăшĕ сак çине ларчĕ, Наçтук ăна пахилкке тăхăнма пулăшрĕ. Унти çынсене çав тери тимлĕн сăнарĕ хĕрача. Чирлисен хушшинче ытларах ватăсем. Хăшĕсем лараççĕ. Кашнин уринче асламăшĕнни пек кăн-кăвак пахилкке. Хывнă-тăхăннă чухне чăштăрчăштăр! çăт-çат! тутараççĕ. Аллисенче шприцсемпе эмелсем. Карчăксем пурте пĕр сăнлăн туйăнчĕç ăна: çара пуçлисем те, тутăрлисем те, калпаклисем те. Шурă алăк тăрринчи хĕрлĕ çутă мĕлтлетмессерен пĕрин хыççăн тепри укол тутарма кĕреççĕ. Шалта шапшурă халатлă, çӳллĕ калпаклă аппасем кускалаççĕ.

– Мĕнле шăп кунта. Никам та нăйкăшмасть. Ачасен поликлиникинче мĕн тĕрлĕ сасă çук-ши! Кăшкăраççĕ, макăраççĕ хăшĕсем, – шухăшларĕ Наçтук.

Черет хăвăрт шăвать. Акă кăвак çӳçлĕ курпун мучи кăштăртатса çитрĕ. Аллине пилĕкĕ тĕлне тытса тенкел çине ерипен вырнаçрĕ те кĕсйинчен пахилкке кăларчĕ. Наçтук питĕ шеллерĕ старике. Вара чăтса тăраймарĕ, ун патне пычĕ.

– Асатте, пулăшам-и? – ыйтрĕ хăюсăррăн.

Ватă çын хĕрачана куçран тинкерчĕ. Пĕркеленчĕк сăн-пичĕ кулăпа çуталчĕ.

– Тавтапуç, çеçпĕлĕм. Аслисене яланах хисепле. Сывлăхна пĕчĕкренех упра. Уколран ан хăра, – пуçран шăлчĕ ăна. – Ӳссен кам пуласшăн-ха эсĕ?

– Тухтăр пулас килет...

– Маттур! Ĕмĕтӳ пурнăçланатех санăн.

Укол хыççăн асламăшĕпе мăнукĕ киле кайма тухрĕç.

– Асанне, манăн та больницăна каймалла, – амăшĕ каланине аса илчĕ Наçтук.

– Мĕнех, пĕрле кайăпăр. Шикленме кирлĕ мар, сар хĕвелĕм. Эсĕ текех пĕчĕк мар ĕнтĕ. Тухтăр пуласшăн ав...

Тепĕр ирхине вĕсем ача-пăча поликлиникине çитрĕç. Коридорта шăкăрин лараççĕ кăвак «пушмаклă» ачасем. Кураври пуканесем евĕрех. Пурте пахилккепе. Паян кунта кăшкăрса йĕрекен те, ашшĕ е амăшĕ умĕнче юнтарса турткаланакан та çук. Пĕри вара, лĕпĕш пек чĕлтĕртетӳллĕ хĕр пĕрчи, ушкăнра чи пĕчĕкки. Амăшĕ çумĕнче тăраканскер «Ай-ай-ай, ку-ку! Ай-ай-ай, ку-ку!» – тесе алă çупсах юрлать.

Лаборатори пӳлĕмне кĕме черет çитсен Наçтук алăка хăюллăн уçрĕ. Пукан çине вырнаçрĕ те направление сĕтел çине хучĕ. Медицина хатĕр-хĕтĕрне хăвăрт куçласа çаврăнчĕ вăл. Хумханнипе çан-çурăмĕ сӳлетсе илчĕ пулин те аллине кăшăрт тăсрĕ перчеткеллĕ çамрăк хĕр умне. Пӳрнерен чикнипе кĕлетки туртăнсах илчĕ, анчах хĕрача нăйкăшмарĕ. «Пулчĕ те. Вăт маттур!» – мухтарĕ ăна кăвак куçлă пике. Вара Наçтук коридора тухрĕ. «Ай-ай-ай, ку-ку! Ай-ай-ай, ку-ку!» – ĕнерлесе асламăшĕ патне чупрĕ. Çав кунран Наçтук больницăна хаюллăнах çӳрерĕ.

«Эсĕ пултаратăнах!»

Комсомольски районĕнчи Комсомольскинчи 2-мĕш шкулăн вĕренекенĕсен пултарулăхĕнчен тĕлĕнсе çитерме çук. Юрлаççĕ те, ӳкереççĕ те... Анастасия Чипчигина, сăмахран, ташлама ăста. Асламăшĕ сĕннипе кăна мар, хăйĕн туртăмĕ пулнипе те хĕрача ташă ăсталăхне лайăхрах вĕренме тĕв тытнă иккен, çавăнпа хушма пĕлӳ илме ӳнер шкулне çӳреме тытăннă.

Малтанах Настя ташă ушкăнĕнче пултарулăхне туптанă. Халĕ вара хăйне уйрăммăн та сцена çине тухать. Пĕлтĕр вăл республика шайĕнчи «Хавхалану» конкурс-фестивальте «Ташă пултарулăхĕ» номинацире Гран-при çĕнсе илнĕ. Унта маттурскер узбек тата тутар ташшисемпе тĕлĕнтернĕ.

– Мана ытларах хăвăрт хускануcем килĕшеççĕ, – палăртать Настя. – Чăваш, вырăс, китай, узбек, тутар, ирланд тата ытти халăх ташшисене те кăмăллатăп. Ташăра кăмăл-туйăма кăтартма пулать тата вăл пире пурнăçри йывăрлăхсемпе те кĕрешме пулăшать.

Çамрăк ташăçă ытти енĕпе те маттур. «5» паллăпа çеç вĕренекенскер ӳкерме те ăста.

– Чи кирли – тăрăшулăх, – тет вăл. – Вара пĕтĕмпех пулĕ. «Пултараймăп», – тесе нимĕн тумасăр лармалла мар. Эсĕ пултаратăнах! Хăвна шанма тытăнсан пурнăç ырă енне улшăннине тӳрех асăрхатăн.

Лариса ПЕТРОВА.

ЧУНРИ

Пур-ши юрату?

Юрату… Пур-ши вăл тĕнчере? Çĕр çинче юрату мар, асап та хурлăх хуçаланать пулĕ. Эпĕ вун ултă çулта пулсан та юрату мĕн иккенне пĕлместĕп, мĕншĕн тесен эпĕ çак туйăмпа «чирлесе» курман. Çук, эсир ан шухăшлăр ку хĕр клуба та тухмасть тесе. Кашни шăмат кунах унта каятăп. Анчах кашнинче тĕрлĕрен каччăпа калаçатăп. Çавăнпа та малалла мĕнле пурăнмаллине пĕлместĕп. Эпĕ халĕ çамрăк вĕт-ха, манăн пурăнмалла та пурăнмалла. Ман пата, тен, юрату килмест те пулĕ. Эпĕ хамăн çамрăклăха хамах пĕтерсе хутăм.

Телейсĕр ХĔР.

Патăрьел районĕ.

Манпа çеç сӳремест

Нумай шухăшланипе пуç та ыратакан пулчĕ. Вăхăт-вăхăт хама телейлĕ туятăп, вăхăт-вăхăт – телейсĕр. Мĕншĕн тетĕр-и? Çын ăнланĕ-ши манăн хуйха? Эпĕ халĕ вун çиччĕре. Анчах та çак çула çитсен те манăн хампа кăна çӳрекен каччă пулман. Пĕрремĕш каччă паллашнă хыççăн мана сакăр уйăхран пăрахрĕ. Халĕ хăйĕн юлташĕсене эпĕ ăна пăрахнă тесе çӳрет. Ун хыççăн ман пата нумай каччă çӳрерĕ, анчах та эпĕ вĕсенчен пĕрне те çывăха ямарăм, мĕншĕн тесен малтанхинех юратрăм-ха. Халĕ вара ман пата урăх каччă çӳрет. Çав вăхăтрах тепĕр хĕр патне те ĕлкĕрет-çке вăл. Çакна малтанах пĕлнĕ пулсан унпа çӳремĕттĕм. Пĕр уйăх пек кăна туслă-ха унпа, çапах эпĕ ăна питĕ юрататăп. Туятăп, вăл та мана юратать. Анчах та унăн малтанхи хĕрĕ чăрмантарать пире. Вăл эрне вĕçĕнче хуларан килсен манăн каччă ун патне каять. Эрне варринче вара ман пата килет. Вăл, хăй пĕлтернĕ тăрăх, пире иксĕмĕре те юратать.

Туссем, калăр-ха мана, çӳремелле-и унпа е çук? Эпĕ унсăр пурăнаймастăп, мĕншĕн тесен питĕ юрататăп ăна…

ЧИПЕРККЕ.

Патăрьел районĕ.

Кулать пулĕ

Кашни çулах яла кукамай патне хăнана çӳретĕп. Унта юлташ хĕрпе час-часах клуба тухатпăр. Пĕррехинче пĕр качча юратрăм. Ăна малтанах, хам пĕчĕк чухнех курнă-ха, анчах та вăл мана килĕшессе шутламан. Толик хитрескер, кăвак куçлăскер. Вăл манăн пиччепе пĕр çулта, иккĕшĕ туслă.

Эпĕ ун çине пăхма та вăтанатăп. Каçхине çывăрса каяймасăр чылайччен йăраланса выртатăп, мĕншĕн тесен ун çинчен шухăшлатăп.

Пĕррехинче юлташ хĕрпе клубран килеттĕмĕр. Ăна куртăм – тусĕпе тăратчĕ. Вăл мана чĕнсе илчĕ. «Паллашар-и?» – тесе ыйтрĕ. Эпĕ нимĕн те чĕнмерĕм. Кайран вара ӳкĕнсе çӳрерĕм. Кашни кунах клубра Толике куртăм. Вăл ман çине пăхмасть те. Эпĕ ăна кăсăклантармастăп, вăл йăкăл-якăлсене кăна асăрхать.

Пĕр кунхине тата велосипедпа ярăнса çӳреттĕм. Вăл мана курчĕ те чарчĕ, манăн велосипед çине ларчĕ те эпир малалла кайрăмăр. «Сана юратни миçе çул ĕнтĕ», – терĕ. Манăн ăна çавăнтах ыталаса илес килчĕ. Вăл ку сăмаха кулса кăна каланине пĕлетĕп. Мана курсан яланах: «Ăçта каятăн?» – тет. Манăн вара вăтаннипе пит хĕрелет.

Каникул вĕçленчĕ, эпĕ Толике урăх кураймарăм.

АНТОНИНА.

ПОЭЗИ ЫТАМĔНЧЕ

Вăйă карти

Урампала пынă чух
Купăс сасси янăрать.
Савнипеле утнă чух
Манăн чĕрем кăлт тапать.

Шăпчăк юрлать юррине,
Ытарма çук сассине.
Уйăх сапать çутине
Хĕвел ансан каçхине.

Ташă кĕвви янăрать,
Чунăм ташлама тухать.
Вăйă карти пухăнать,
Яшĕ-хĕрĕ савăнать.

Çĕнĕ юрă пуçлатăп,
Купăс умне тухатăп.
Чунăм савнă çыннăмпа
Ташша пĕрле яратăп.

Алла-аллăн тытăнса
Кăвайт урлă сикетпĕр.
Чăваш ташши ташласа
Вăйăа илем кӳретпĕр.

Николай ЕЛЛИН.

Патăрьел районĕ,
Çĕнĕ Ахпӳрт ялĕ.

Чĕрере – Дима кăна

Эпĕ вун икĕ çул тултарсан пĕр яша юратрăм. Вăл та мана килĕштерчĕ. Эпир унпа нумай кун пĕрле иртертĕмĕр. Юрларăмăр, савăнтăмăр, анчах та пирĕн уйрăлмалла пулчĕ. Чăрмантараканни – анне. «Пĕчĕк-ха эсир», – терĕ вăл. Вара эпĕ çакăн хыççăн кашни кунах йĕреттĕм. Анчах та хурлăха куççульпе ирттерсе яраймăн. Эпĕ халĕ те ун çинчен шухăшлатăп. Ахальтен каламаççĕ пуль çав пĕрремĕш юратăва манма çук тесе. Манăн чĕрере – Дима кăна. Унсăр пуçне никам та кирлĕ мар. Димăпа çеç пулас килет.

Тусăмсем, тĕрĕс тăватăп-ши эпĕ?

ЛЮДМИЛА.

ЫТАРЛĂ ХАЛАП

Кӳренӳ çинчен

Вĕренекен вĕрентекенĕнчен ыйтрĕ:

– Эсĕ епле ăслă. Санăн кăмăл-туйăм ялан аван, нихăçан та тарăхмастăн. Мана та çавăн пек пулма пулăш-ха.

Вĕрентекен килĕшрĕ, çĕрулми тата витĕр курăнакан хутаç илсе килме ыйтрĕ.

– Эсĕ кама та пулин тарăхсан, çилленсен çак çĕрулмине ил, – терĕ вăл вĕренекене. – Пĕр енне хăвăн ятна çыр, теприне – кӳрентернĕ çын ятне. Унтан çĕрулмине хутаça яр…

– Çапла кăна-и? – тĕлĕнсе ыйтрĕ вĕренекен.

– Çук, – терĕ вĕрентекен. – Çав хутаça санăн яланах пĕрле йăтса çӳремелле. Кама та пулин кӳренсенех унта çĕрулми ямалла.

Вĕренекен килĕшрĕ. Тепĕр вăхăтран унăн хутаçĕ тулсах çитрĕ, йывăрланчĕ. Ăна пĕрле йăтса çӳреме çăмăл мар. Çитменнине, чи малтан хунă çĕрулми пăсăлма тытăннă, ăна вĕтĕ шăнасем тапăннă. Çĕрулмисенчен аван мар шăршă кĕрет.

Хайхискер вĕрентекенĕ патне пычĕ те:

– Ку хутаça текех пĕрле йăтса çӳреме май çук. Пĕрремĕшĕнчен, вăл питĕ йывăр. Иккĕмĕшĕнчен, çĕрулмисем çĕрме пуçланă. Мĕн те пулин урăххине сĕн-ха, – терĕ.

– Санпа та çавăн пекех пулса иртет. Эсĕ кама та пулин тарăхсан, кӳренсен чунунта йывăр чул тупăнать. Çакна тӳрех асăрхамастăн çеç. Кайран чул нумайланса пырать. Путсĕрле ĕçӳсем йăлана кĕреççĕ, кăмăлу усалланать… Çав тиев пирки манма ансатрах, ăна ялан пĕрле йăтса çӳреме йывăр-çке. Ку мĕнле пулса иртнине сăнама май туса патăм сана. Эппин, çилленес е кама та пулин кӳрентерес тенĕ чухне лайăх шухăшла, çав чул кирлех-ши сана?

Страницăна Лариса ПЕТРОВА (тел. 56-11-80) хатĕрленĕ.

ВУЛАВ ТЁНЧИ

ÇЁНЁ КЁНЕКЕ

Кашни йёрки – ахах пёрчи

«Поэзи çăлкуçё – илемре», – тенё Н.В. Гоголь. Чӳречерен йăпшăнакан хёвел шевли, пахчари мăнкăмăллă та ёлккен кёлчечек, çуркуннепе чёрёлекен ешёл курăкпа ачаш папка, çумăр хыççăн карăнакан асамат кёперё, çилпеле вёлтёртетсе анакан сарă çулçă – çут çанталăкра йăлт илемпе, лăпкăлăхпа сывлать. Çеккунтсерен улшăнакан пурнăçра кашни саманта хаклама, унăн хитрелёхне асăрхаса савăнма пёлни пёлтерёшлё. Çакна сăвăçран лайăхрах кам ăнлантăр-ха? Çавăнпа поэтăн нуши-терчё те илемлё – никамăнни пек мар, çивёч туйăмлă, илёртӳллё.

Тёнче черченлёхне курма, ыратăва чунсене сиплекен пылак шерпете çавăрма сăмахăн чăн-чăн ăрăмçи çеç пултарать. Чăваш литературинчи çавăн пек ăстасенчен пёри – Любовь Мартьянова. Нумай пулмасть Чăваш кёнеке издательствинче унăн «Çавра çил варринче манăн кун...» кёнеки /тиражё – 500 экземпляр, редакторё – Ольга Иванова, ӳнерçи – Юлия Алексеева/ пичетленсе тухрё.

Любовь Васильевна 1950 çулхи раштав уйăхён 16-мёшёнче Сёнтёрвăрри районёнчи Карапаш ялёнче çуралнă. Октябрьскинчи вăтам шкулта пёлӳ пухнă, И.Н. Ульянов ячёллё Чăваш патшалăх университечён историпе филологи факультетёнчен вёренсе тухнă. 1974-1977 çулсенче Патăрьел районёнчи Турханти вăтам шкулта учительте ёçленё. 1977 çултан пуçласа нумай çул «Тăван Атăл» журналта вăй хунă. 1986 çулта СССР Писательсен союзне кёнё.

Çыравçă – В.Митта ячёллё преми лауреачё. Любовь Мартьянова – «Эпё чёртнё вучах» /1982/, «Сенкер ачалăх» /1983/, «Шурă юр юрри» /1986/, «Йышăнман сăмахсем» /1991/ кёнекесен авторё. Çёнё кăларăмри сăвăсене икё пая уйăрнă: «...Илемшён кăна килменех çёр çине, Çапах та – илемлё пурнасчё...» тата «...Сенкер куçсен сенкерлёхне Чёнеп сенкер ёмётёме...». Вулакана вёсем туйăмсен тасалăхёпе, хăйне евёрлё кёвёлёхёпе тата тарăн шухăшлăхёпе тытăнлаççё. Кашни йёрки – ахах пёрчи. Вуласа киленер-ха эппин:

Шур кайăкăн шур тунсăх вёççе анё
Калайман сăмах тёшши çине.
Çеçкеленё те – кёвве куçса шăранё
Чун парса чулланнă чунсене.

Лирика геройён юратăвёпе çепёçлёхё çăлкуç таппи пек иксёлми. Хăйёншён çеç тăрăшасси, каппайланасси ют ăна. Ёçёсене таса чун тараси çине хурса виçни урăхла пулма май памасть. Çывăх çынна телейпе хавхалану пиллени хăйне те çунатлантарать:

Сан телейне курса –
пин хут телейлёрех эп.
Сан савнăçна курса –
пин хут савнăçлăрах.
Эс шăппăн, вăтанса юрлан пулсассăн
Эп саспа, савăнса юрлап.
Сан кăмăлна курса –
пин хут кăмăллăрах эп.
Сан туйăмна туйса –
пин хут туйăмлăрах.

Ултавпа, кёвёçӳпе е тӳрккеслёхпе тёл пулсан та каçарма, çёнёрен ура çине тăма, кулленхи пурнăçпа савăнма хал çитерет лирика харкамçи:

Ӳкнё те тăнă, утатпăр,
Эй, çавăрттар, çавра çил.
Чёрё-ха, сывă, пурнатпăр,
Пур талпăнмалăх ăш пил.

Кун-çулё «çавра çил варринче» иртет пулин те, йăлт витёр курать, ăнланать сисёмлё сăнар, ырра шанма пăрахмасть. Йывăрлăхсене парăнманлăхпа хаваслăх – унăн çулташёсем. Вёсемех лирика геройён тёнчине – асамлăхпа хăтлăх, чунне канăçлăхпа ăшпиллёх илсе килеççё.

Каллех телейлё эп,
каллех яланхиллех.
Утас çёртен чупатăп эп,
ӳкместёп пек текех.

Каллех мăнаçлă эп,
каллех ёнерхиллех.
Чупас чухне вёçетёп эп,
çитетёп пек кёçех.

Каллех хаваслă эп,
каллех унченхиллех.
Манас çёртен çунатăп эп,
саватăп çирёпрех.

САВĂНĂÇ

Тилё юмах юптарать



Чăваш халăх сăмахлăхёнче тилё çинчен хайланă чылай юмах-халап, каларăшпа тупмалли юмах упранать. Çак чёрчун чееленме, ют пурлăха хапсăнма юратнине шахвăртса: «Тилё куçё тёлёкре те чăх курать. Хёрлё хёрлемес хир чăххине хёрхенмест», – тенё ваттисем. Анлă сарăлнă шухăш мён пёчёкрен пирёнте те çирёпленнё. Кам-ха тилле пархатарлă сăнарсен йышне кёртё?

Чăваш кёнеке издательствинче кун çути курнă çёнё кёнеке – «Тилё юмахёсем» – хёрлемесён «таса ятне» тавăрмасть пулин те, ун çине урăхла куçпа пăхма хистет. Кăларăма /тиражё – 1000 экземпляр/ чăваш халăхён тилё çинчен калакан вун виçё юмахё кёнё. Вёсене пухса йёркелекенё тата редакторё – Ольга Иванова.

Кёçён классенче вёренекен ачасем валли хатёрленё кёнеке чи малтанах илемлё ӳкерчёксемпе тыткăна илет. Пултаруллă çамрăк ӳнерçён – Анна Сушковăн – ёçёсем хёвел пек ăшă кăмăллă, çуллахи кун пек çутă, çырла уçланки пек хитре. Пăхса ытармалла мар чипер!

Акă пёрремёш юмахра тилё тус карчăкпа старик умёнче хăйне еплерех сăпайлă та асăрхануллă тыткаланине ӳкерчёк çине пăхсах ăнланма пултаратпăр. Малалла вуланă май çакна пёлетпёр: тилё япшар калаççах кёпеллё-тухьяллă та, мăй çыххипе сулăллă та пулать. Юлашкинчен мёнпур мулпа вăрмана тухса шăвăнать. Çёнё çёлёк çинчен ёмётленекен карчăкпа старик вара çăвар карса юлаççё...

Ку хайлаври тилё эпир курма хăнăхнă пек чее, тавçăруллă. Кёнекере унран пач раснарах кăмăллисем те пур. Пёрисем мёскён те хуйхăллă, вёсене шеллес килет. Теприсем ырă кăмăлёпе палăраççё, кăткăс лару-тăрура ытти чёр чунпа вёçен кайăка кăна мар, этеме те пулăшаççё. Виççёмёшёсем хёрхенӳ мённе вуçех пёлмеççё, тӳрех тавăрма, тёп тума хатёр. Тăваттăмёшёсем айванлăхёпе хапсăнчăклăхне пула хăйсен кун-çулне хăйсемех тирпейлеççё. «Чее тилё те читлёхе лекет», – тенё ёлёкех чăвашсем. Çаврăнăçулли те çакланать-тёк ăсран айванраххи çинчен мён каламалли пур? Ăс – укçа мар, кивçен илеймён. Çавă çеç.

Тантăшăмăрсем, пёр тилё çула тухнă тет. Вăл сире хăйён юмахёсене юптарса парасшăн. Эппин, кётсе илёр ăна, хапăлласа йышăнăр!

Страницăна Ольга АВСТРИЙСКАЯ хатёрленё.

«Тантăша» ачасем кăна мар, вёрентекенсемпе ача сачёсен воспитателёсем те юратса вулаççё. Хаçат материалёсемпе вёсем класс тулашёнчи ёçсене ирттернё чухне те тăтăшах усă кураççё. Анчахрах Элёк районёнчи Тавăт ялёнчи «ПУЧАХ» 3-мёш ача сачён воспитателёсем уяв сценарийёсем сёнчёç.

Урăм вăйăсем

(Алина Геннадьевна КОМИССАРОВА хатёрленё уяв сценарийё)

Сцена çине пёр енчен ачасем /икё хёрачапа икё арçын ача/, тепёр енчен «асатте» /ватă çын евёр тумланнă арçын ача, туяпа/ тухаççё.

Ачасем: Сывлăх сунатпăр, асатте.

Асатте: Ырă кун пултăр, ачасем.

1-мёш арçын ача: Паян çанталăк питё лайăх.

Асатте: Чăнах та, кайăксем юрлаççё, хёвел пăхать.

1-мёш хёрача: Асатте, урама тухма ирёк парсам.

Асатте: Çук, тусăмăрсем, ямастăп. Ан та ыйтăр.

2-мёш хёрача: Асатте, кайма ан чарсам ёнтё. Эпир сана юрă юрласа савăнтарăпăр.

Асатте: Итлесе пăхам эппин юррине.

/«Ах, асатте, асатте» юрă шăрантараççё/.

Ах, асатте, асатте,
Яр-ха пире выляма.
Илсе килёпёр сан валли
Чăмăр улма йăпанма */хёрачасем/.*

Ан ыйтăр, ямастăп
Чарусăрскерсене.
Выльăр кунтах, ачасем,
Мана савăнтарăр */асатте юрлать/.*

Ах, асатте, асатте,
Яр-ха пире выляма,
Илсе килёпёр сан валли
Сарă мăйăр йăпанма */хёрачасем/.*

Ан та ыйтăр, ямастăп
Чарусăрскерсене.
Выльăр кунтах, ачасем,
Мана савăнтарăр */асатте юрлать/.*

Ах, асатте, асатте,
Яр-ха пире выляма,
Илсе килёпёр сан валли
Пёр кинеми каласма */ачасем/.*

Апла пулсан чармастăп,
Чёнсе килёр хăвăртрах.
Кинемипе каласма
Эп хаваслă яланах */асатте юрлать/.*

1-мёш хёрача: Тавтапуç, асатте! Маринне, атя ачасене чёнетпёр.

2-мёш хёрача */Марине/*: Атя!

Пёрле: Ачасем, тухăр, тухăр!

/Ачасем «Илемлё, илемлё» чăваш халăх юрă кёввипе утса тухаççё. Çавракара алла-аллăн тытăнса юрă сăмахёсемпе килёшӳллён хусканусем тăваççё. Юрă вёçёнче икё ушкăна пайланаççё, хире-хирёç йёркеленсе тăраççё/.

2-мёш арçын ача: Ачасем, атьăр выляр!

Пурте: Выляс, выляс.

2-мёш арçын ача: Мёнле вăйă-ши?

Пурте: Шăрçа ярăмле.

2-мёш арçын ача: Алă татайманнисене мён тутармалла?

Пурте: Сăвă калаттарас, сăвă калаттарас.

/Вăйă выляççё/.

Шăрçа ярăм пурте пур,
Симёс шăрçа анчах çук.
Пирён ачасем пурте пур,
Ваня ятли анчах çук.

/Ячё тухнă ачан хирёç ушкăнри тусёсен аллисен çыхăнăвне чупса пырса татмалла/.

Ачасем: Татаймарăн, Ваня, татаймарăн. Каласа пар-ха пире пёр-пёр сăвă.

/«Чăхсене култарать» сăвă/.

Коля тухрё картишне
Чăхсене апат пама.
Темён пулчё вёсене –
Тытăнчёç ахăлтатма.

Коля пирён пултарать,
Чăхсене те култарать.
Кăçатă – пёр уринче,
Сăран атă – тепринче.

Эсё çёлёк вырăнне
Чашăк ларт-ха пуç çине.
Ай-вай, мыскара пулать.
Коля пек тирпейсёрсем
Сирён çук-и ачасем?

Пурте: Э… çук, çук!

Хёрача: Атьăр, татах выляр!

Пурте: Выляс, выляс /Сашука чёнеççё/.

Арçын ача: Сашука мён тутарăпăр, туссем?

Пурте: Юрлаттарас, юрлаттарас!

Сашук: Эп шутлатăп пиллёкчен,
Пултараймас вуннăччен.
Пёрре, иккё, виççё, тăваттă, пиллёк…
Ачасем, тухăр мана пулăшма,
Юрă юрлама.

Арçын ачасен ушкăнё «Автобус» юрра /сăвви А.Кăлканăн, кёвви Г.Лисковăн/ юрласа парать.

3-мёш хёрача: Юрлар кăна, юрлар,
Ай, тантăшсем,
Шăнкăрав пек сасса янратса,
Çутă, савăк куна мухтаса.

Юрă /ушкăнпа/.

1-мёш ушкăн */малалла утса/*:
Улми лайăх-и, çырли лайăх-и,
Улми лайăх-и, çырли лайăх-и.

2-мёш ушкăн:
Пирёншён пулсан улми лайăх,
Çырли тата лайăхрах.

1-мёш ушкăн:
Тулли лайăх-и, ырашё лайăх-и?
Тулли лайăх-и, ырашё лайăх-и?

2-мёш ушкăн:
Пирёншён пулсан ырашё лайăх,
Тулли тата лайăхрах.

1-мёш ушкăн:
Юрри лайăх-и, ташши лайăх-?
Юрри лайăх-и, ташши лайăх-и?

2-мёш ушкăн:
Пирёншён пулсан юрри лайăх,
Ташши тата лайăхрах.

2-мёш арçын ача:
Эпир паян юрларăмăр, сăвă та каларăмăр, анчах та ташлама ёлкёреймерёмёр.

3-мёш арçын ача:
Акă пирён пикесем,
Ачаранах сатурсем.
Ташлаттарас хёрачасене.

4-мёш арçын ача:
Акă пирён каччăсем,
Ачаранах маттурсем.
Ташлаттарас арçын ачасене.

Пурте:
Ташлаттарас, ташлаттарас.

Юрăпа ташă сюити /«Ташă кёвви», сăвви халăхăн, кёвви Ф.Лукинăн/.

Атьăр ташша тухар-и те,
Атьăр ташша тухар-и?
Ура тапса ташлар-и те,
Ура тапса ташлар-и?

Атьăр ташă пуçлар-и те,
Атьăр ташă пуçлар-и?
Ура хуçса ташлар-и те,
Ура хуçса ташлар-и?

Ма юрлас мар та, ташлас мар та,
Ма юрлас мар, ташлас мар.
Савăнăçлă ӳснё чух та,
Савăнăçлă ӳснё чух.

5-мёш хёрача: Ачасем, атьăр киле каяр, ыран вăйăа татах тухăпăр.

6-мёш хёрача: Кайиччен юрă юрлăпăр.

5-мёш хёрача: Пахчи-пахчи…

Ачасем: Юрлас, юрлас.

/«Пахчи-пахчи» юрă çеммипе юрласа утса каяççё/.

Салам, светофор

(Лариса Михайловна ПЕТРОВА хатёрленё уяв сценарийё)

Воспитатель: Ачасем, эпир пурте пёрле хула урамёнчи светофор патне çыру çырнине астăватăр-и? Садике хăнана йыхравласа чённёччё. Вăл хăйён сăмахне тытрё. Пирён пата килме шантарчё.

Светофор */кёрет/:* Сывлăх сунатăп сире, пёчёк тусăмăрсем! Сире курма питё хавас. Эсир мана палларăр пуль тетёп. Эпё – светофор.

Воспитатель: Пирён ачасем сире лайăх паллаççё. Светофор мён тума кирлине те пёлеççё. Яланах эс çул çинче, кунён-çёрён канăçсăр ёçлетён. Çавăнпа та сана хамăрăн уява чёнсе пёрле выляс терёмёр.

Светофор: Тавтапуç, ачасем. Манăн юратнă тёссене пёлетёр-и-ха эсир?

Воспитательпе ачасем: Хёрлё, сарă, симёс.

Светофор: Тёрёс. Пёрремёш тёс – хёрлё. Çул урлă каçакан та, транспорт та ман тёсе курсан чарăнса тăрать. Пурте кăштах канса илеççё.

Иккёмёш юратнă тёс – сарă. Вăл пурне те çул çинче «Асăрханăр, пёр-пёрне упрăр, çул урлă каçма хатёрленёр», – тет.

Виççёмёш юратнё тёс – симёс. Çак тёс суталса кайсан, мён тумалла-ха, тусăмсем? Тёрёс, çул урлă каçма юрать.

Халь вара сирёнпе пёрле вăйă выляса илме пит хавас.

Çакăнта манăн юратнă тёссемпе илемлетнё мечёксем. Сирён çак мечёксен тёсне кура кăшăлсем ăшне хурса тухмалла */хёрлине – хёрли ăшне, саррине – сарă кăшăл варрине, симёссине – симёс тёслин ăшне/. /Хаваслă кёвё янăрать, ачасем мечёксене пуçтараççё/.*

Воспитатель: Маттур, ачасем. Светофор, пирён ачасем сан çинчен сăвă та пёлеççё.

Светофор:
Эх, чупаççё вăр! та вăр!
Машинсем унта-кунта.
Ак виç куçлă светофор
Куç хёсет мана:
– Тăхта!
Ай, ан каç çул урлă! – тет
Хёрлё куç. – Инкек çеç тăвăн!
– Тимлё пул! – тесе хистет
Сарă куçё те. – Çул хупă!
Йăл çиçет те симёс куç:
– Уттарах! – тет. – Тавтапуç!

Светофор: Маттур, ачасем, питё килёшрё ку сăвă мана. Манпа юнашарах çакăн пек йăрăмлă-йăрăмлă çулсем пулнине пёлетёр. Мён тума кирлё-ха çак йёрсем?

Ачасем: «Зебра» ятлă вёсем, Светофор пиччe! Çынсем çул урлă каçнă вырăнта пулаççё яланах.

Светофор: Мён тери маттур вёт-ха эсир. Йăлтах пёлетёр.

Воспитатель: Светофор пиччe, хăвăн çуттусене çутса тёрёсле-ха. Çул урлă каçма пёлеççё-и пирён ачасем! */Светофор хёрлё, сарă, симёс çавракасем кăтартать. Симёс тёспе ачасем çул урлă каçаççё/.*

Воспитатель: Ачасем, атьăр хамăрăн хăнапа пёрле тепёр вăйă выляр. Вăйă ячё «Машинăри кайăксем». */Ачасене кайăксен маскисене тăхăнтартаççё/.*

Воспитатель:
Вёçсе килчёç кайăксем,
Пёчёк-пёчёк чёпписем
Сиккелеççё çул çинче,
Вёçсе çӳреç майёпен,
Шыраç тырă пёрчине */ачасем пёшкёнсе ларса урайне пӳрнисемпе шаккаса «тырă» пёрчи шыраççё/.*

Воспитатель */пёчёк машина е руль тытса юрласа тухать/:*
Тӳрё тикёс çулпала
Пёр автобус вёçтерет.
Хăйне ирёк çул пама
Вăл таçтанах систерет:
Ту-ту-ту! */2 хут/*,
Таптанатăн вёт, асту!

/Ачасем «Кайăксем» пуканесем çине кайса ларaççё. Вăйăа икё-виçё хутчен выляççё/.

Светофор: Питё маттур, ачасем, эсир! Ман тата сире ыйтусем, тупкавсем парса сирён тавракурăма тёрёслессём килет. Итлёр апла.

– Хăй курмасть,



Пурне те кăтартса ярать */çул палли/.*
Çӳренё чух çӳретёп,
Вёçертсенех ӳкетёп */велосипед/.*
– Урамра урапаллă пӳртсем чупаççё,
Çынсене ёçе турттараççё,
Ачасене шкула леçеççё */автобус/.*

Чун савăнать: мён тери пултаруллă сирён ачасем. Выляма та, канма та пёлеççё вёсем. Сире пурне те хамăн парнепе савăнтарас тетёп. Акă, илсемёр. */Кашни ачана транспорт çинчен тата çул-йёр правилисемпе çыхăннă плакатсем парнелет/.* Ну, халё манăн кайма та вăхăт çитрё. Çул çинче асăрханса çӳрёр. Сывă пулăр, тепре тёл пуличчен. */Светофор тухса каять, воспитательпе ачасем хăна парнипе малалла паллашаççё/.*

Унта-кунта упăте, Туп шыраса, хăш тĕлте?

Сирĕн умра упăтесем ларса тухнă. Анчах хăшĕ ăçта-ши? Эппин, тупма пулăшăр-ха. Тĕслĕхне илсех кăтартнă.



Пуçваттăш



Çак ӳкерчĕкри арçынсем Р. Быков лартнă кино ятне йăтса пыраççĕ. Анчах вăл мĕнлине вĕсене тĕрĕс лартса тухсан çеç пĕлме пулать. Апла тăк – шыракан тупать.

Асамлă çăраççи

Çак çаврашка тавра ваттисен сăмахĕ пытаннă. Ăна вуласа пĕлме асамлă çăраççи пулăшĕ.



Сăмахкаçмăш



Сылтăмалла: 2. Ялти «будильник». 6. Кантра, вĕрен, … 8. Океан «тăванĕ». 9. Теннисистăн ĕç хатĕрĕ. 10. Маугли «амăшĕ». 12. Вăл выртсан-выртсан мăклансах каять. 14. Турист «хваттерĕ». 17. Ĕçрен ĕçе вĕççе çӳрекен. 18. Африкăри пушхир. 20. А. Пушкин юмахĕнчи патша. 21. Хулран илекен тĕрĕслев. 22. Болгарсен авалхи патши. 26. Тăварлама усă куракан шĕвек. 28. Авалхи хĕрарăм ячĕ. 30. Чейпе сăйланмалли савăт. 31. Пулă тытмалли хатĕр. 32. Укçа хутаççи. 33. Ун айĕнче шăши вилмен.

Аялалла: 1. Чи çывăх çын. 3. Юрлама вĕренмелли меслет. 4. Хими элементчĕ. 5. Панулми сорчĕ. 7. Самолет пусми. 8. Килти выльăх. 11. Мухтанчăк. 13. Унтан уçлăха вĕçеççĕ. 15. Чăваш композиторĕ. 16. Унсăр телевизор кураймастăн. 17. Австралири чĕрчун. 22. Ăна лезгинка ташланă вăхăтра кăшкăраççĕ. 23. Насусăн урăхла ячĕ. 24. Свердловск облаçĕнчи хула. 25. Ăна калта пăрахса тарать. 27. Лашан юратнă апачĕ. 29. Хĕр тупса параканскер.

Николай КРАСНОВ (Йĕпреç районĕ) ***хатĕрленĕ.***